# ХУСАНКАЙ
# АКАДЕМИЙĔН СЕССИЙĔ

ЧĂВАШ халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май чылай çĕрте тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ, пирĕн республикăра çеç мар, ытти регионра та. Çак паллă пулăма халалласа И.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче Хусанкай академийĕ уçăлнă, Чăваш Енре вăл – пĕрремĕш. "Хусанкай академийĕ организаци мар. Вăл – сессисем, шкулсенче, ытти вĕренӳ заведенийĕнче тата тĕрлĕ çĕрте Хусанкая халалласа ирттерекен мероприятисен ярăмĕ, – каласа кăтартать ЧППУра вырнаçнă Раççей этнопедагогика ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн директорĕн çумĕ Л.Кузнецова профессор, педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ. – Чăваш халăхĕн ятне тĕнче шайне çĕклеме пулăшнă виçĕ çынпа чăннипех мухтанмалла пирĕн: Н. Бичурин востоковедпа, А.Николаев космонавтпа, П.Хусанкай поэтпа. Хусанкай академине уçнă май эпир çакăн пек тĕллев лартрăмăр: Чăваш халăх поэчĕ çинчен республикăри кашни шкул ачи пĕлтĕр, вăл мĕн тери пысăк та пĕлтерĕшлĕ ĕç тунине кашни студент ăнлантăр... Тĕрлĕ мероприяти ирттерме тăрăшатпăр. Хусанкай сăввисене вулас енĕпе конкурс йĕркелерĕмĕр. Тутарстанран хăнасем те килсе курчĕç. Поэтсемпе, писательсемпе тĕл пулусем ирттертĕмĕр. Унсăр пуçне пирĕн институт çырнисен пуххине хатĕрлет. Çак шутра – Г.Волковăн "Хусанкай манăн пурнăçра", А.Хусанкайăн "Ашшĕ ывăлĕн куçĕпе", В.Кузьмина чăвашла та, вырăсла та питĕ лайăх вуланă "Тилли юррисем". Çак çырнисен пуххине ача сачĕсенче, шкулсенче тата ытти вĕренӳ заведенийĕнче май килнĕ таран ытларах сарма тăрăшăпăр. Хусанкай сăввисене кашниех вулама, ун пурнăçĕ çинчен нумайрах пĕлме пултартăр".

Çак кунсенче Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан, уйрăм предметсене тарăннăн вĕрентекен 62-мĕш вăтам шкулта /директорĕ – Н.Кузнецова/ Хусанкай академийĕн сессийĕ иртрĕ. Çавна май унта Чăваш халăх поэчĕн кĕнекисен куравĕ ĕçлерĕ. Кураври кĕнекесене шкулти çеç мар, тĕп хулари ытти библиотекăран та илсе килнĕ-мĕн.

"62-мĕш вăтам шкул – пирĕн университетăн никĕс шкулĕ, сăнав вырăнĕ. Кунти вĕренекенсем чăваш чĕлхине лайăх йышăнаççĕ, вĕсенчен хăш-пĕри чăн вырăс пулсан та. Çавна май ку шкулта час-часах тĕрлĕ тĕл пулу иртет, уйрăмах чăваш чĕлхипе культурине сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен çынсемпе", – ăнлантарать Людмила Кузнецова профессор. Вăл 7 "а" класра ăс пухакансемпе П.Хусанкай поэзийĕн кĕвĕлĕхĕ, килĕшӳлĕхĕ пирки урок ирттерчĕ, вĕренекенсене поэтăн вырăсла çырнă сăввисем чăвашлисем пекех хитре янăранине ĕнентерчĕ.

Раиса Сарпи поэтесса аслă класра вĕренекенсене хăй шкул ачи пулнă чухне П.Хусанкайпа ирттернĕ тĕл пулăва хутшăннине аса илсе каласа кăтартрĕ. "Çак тĕл пулу мана питĕ хавхалантарчĕ. Петр Петровича пулах манăн та поэт пулас килчĕ. Сăмах май, хăй вăхăтĕнче чаплă поэтăмăра пулах манăн атте те сăвă çырма пуçланă", – хавхаланса пĕлтерчĕ вăл.

62-мĕш шкулта вĕренекенсем чăннипех те маттур та пултаруллă пулнине хамăр куçпа курса ĕнентĕмĕр. Вĕсем "Эпир пулнă, пур, пулатпăр!" ятпа чаплă концерт кăтартрĕç. Сăмах май, унта Петĕр Хусанкайăн сассине илтме те, вăл çуралса ӳснĕ вырăнсене те курма тӳр килчĕ. Ачасем чаплă поэтăмăрăн сăввисене вуларĕç: чăвашла та, вырăсла та, акăлчанла та. 62-мĕш шкул директорĕн лингвистика енĕпе ĕçлекен çумĕ Л.Лекарева Петр Петрович сăввисене акăлчанла куçарнă иккен. Вăл хăй вырăсла сăвăсем çырать. "Халиччен сăвă куçарса курманччĕ. Америка литературине вĕрентнĕ май ачасемпе калавсене акăлчанран – вырăсла, вырăсларан – акăлчанла куçаратпăр-ха эпир. Çак мероприятие хатĕрленнĕ май вара сăвăсемпе те ĕçлеме тиврĕ. Çапах та ку ĕç мана килĕшрĕ. Хусанкай сăввисене малашне те акăлчанла куçарăп", – шухăш-ĕмĕчĕпе паллаштарчĕ Л.Лекарева. Концертра П.Хусанкай сăввисем тăрăх çырнă юрăсем те, ытти кĕвĕ те янăрарĕ. Чăваш юрри-ташши, ачасен тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ куракансен кăмăлне çĕклерĕ.

Хусанкай академийĕ çывăх вăхăтра ЧППУ студенчĕсен хушшинче сăвă конкурсĕ ирттересшĕн, Муркаш районĕнчи ял шкулĕнче тĕл пулу йĕркелесшĕн.

■ **Ирина СЕМЕНОВА**